# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

# Муркашсен юратнă вырăнĕ пулĕ



Паркри тĕп çул.




Парк эскизĕ.

ЖИЛЬЕ
И ГОРОДСКАЯ СРЕДА
НАЦИОНАЛЬНЫЕ
ПРОЕКТЫ
РОССИИ



Строительсем паркри палăк таврашĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ.

***Муркаш районĕ активлă хутшăнакан наци проекчĕсенчен пĕри – «Жилье и городская среда» проект. Муркашри Çĕнтерӳ паркĕнчи ĕçсем шăпах ун шайĕнче пурнăçланакан «Формирование комфортной городской среды» федераци проекчĕпе пулса пыраççĕ.***

Икĕ çула палăртнă пысăк ĕçе – парк реконструкцине туса ирттерме пурĕ 13 миллион та 600 пин тенкĕ ытларах уйăрма пăхнă. Вăл шутран пĕрремĕш тапхăрти ĕçсене пурнăçлама – 8 миллион тенкĕ майлă.

Проектпа смета документацийĕ тăрăх, Çĕнтерӳ паркне çĕнетесси икĕ тапхăрпа пурнăçланмалла. Халĕ шăпах пĕрремĕш тапхăрти ĕçсем пыраççĕ. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Андрей Мясников хальхи вăхăта ку тапхăрта тума палăртнă ĕçсен 80 процентне пурнăçланине пĕлтерчĕ.

Пĕрремĕш тапхăрта çĕр ĕçĕсене пурнăçласа паркра унччен пулнă çулсене, архитектура формисене пăсассине, çĕнĕ çулсем тăвассине, ларса канмалли вырăнсем, беседка йĕркелессине, çӳп-çап валли урнăсем лартассине пăхса хунă.

Ĕçсене «Наследие» наукăпа производство предприятийĕ» пĕрлешӳ туса пырать. Хальхи вăхăтра строительсем паркри монумента çĕнетессипе ĕçлеççĕ, ун таврашне йĕркене кĕртеççĕ. Ку таранччен тунă ĕçсем палăк тавра клумбăсем валли вырăнсем уйăрса хăварнине те кăтартса параççĕ.

Паркри симĕс чăрăшсем хăйсен вырăнĕнчех. Çĕнетнĕ тĕп çулăн икĕ енĕпе ӳсекеннисем уйрăмах чаплăн курăнаççĕ. Вĕсем пуртан çулĕ те илемлĕрех.

Хăш-пĕр çĕрте брусчатка сарса пĕтермен вырăнсем пур. Ку ĕçе пурнăçлакансем те пурччĕ паркра. Парка строительство материалĕсене турттарса кĕрекен çула вара, Чапаев урамне илсе тухаканнине, чăн кайран сарассине пĕлтерчĕç.

Çапла паркра пĕрремĕш тапхăрта тума палăртнă ĕçсенчен ларса канмалли саксем, урнăсем вырнаçтарасси тата беседка тăвасси юлать. Çак ĕçсене пурнăçласси самаях кая юлчĕ. Контрактра палăртнă тăрăх, планпа пăхса хунă пур ĕçе те ăшă хĕвеллĕ кунсенчех вĕçлемелле пулнă. Анчах ытти хăш-пĕр объектри пекех, шел пулин те, кунта та подряд тата субподряд организацийĕсем пăтăрмахсем туса панă. Çавна пула муркашсем паркри саксем çине халĕ те ларса канаймаççĕ, унта уçăлса çӳреймеççĕ. Халĕ ĕçлекен строительсен те сивĕ те юрлă-çумăрлă çанталăка пăхмасăрах тимлеме тивет.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ паркра ĕçсене пурнăçланă вăхăтра тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерсе пыма подрядчика тăватă хутчен предписани панине пĕлтерчĕ. Ĕçсен пахалăхне «Анвар» стройконтроль организацийĕ тĕрĕсленĕ. Пĕр хутчен вара çав пăтăрмахсене пĕтерме тесе ĕçе чарса лартмах тивнĕ.

Ял тăрăхĕн администрацийĕнче ăнлантарнă тăрăх, хăтлăх ыйтăвĕсене татса пама проектпа смета документацийĕ тăрăх ĕçсен пĕтĕмĕшле хакĕ темĕнле сумма пулсан та, çулталăка 8 миллион тенкĕрен ытла уйăрса памаççĕ. Ку норматив ĕçсене мĕншĕн икĕ тапхăра уйăрнине ăнлантарать.

Андрей Мясников «Наследие» НПП» пĕрлешӳпе тунă контракт кăçалхи декабрь вĕçĕччен пулнине, ĕçсене вĕçлеме палăртнă вăхăт вара чăнах та иртсе кайнине каларĕ. Халĕ подрядчикăн пĕрремĕш тапхăрпа палăртнă пур ĕçе те ноябрьте вĕçлемелле. Пĕрлешӳ ертӳлĕхĕ кун пирки нумаях пулмасть республикăн Строительство министерствинче иртнĕ канашлура та палăртнă.

Çапах та район администрацийĕ çак ыйтăва вăхăтра пысăкрах тимлĕх уйăрнă пулсан, ял тăрăхĕн администрацийĕ те ыйтăва çирĕпрех контрольте тытнă пулсан, ĕçсем паянхи кун çитиччен тăсăлмĕччĕç пулĕ.

Паркра ку таранччен тунă ĕçсене пăхса çаврăннă май, çак вырăна çĕнетессипе çĕр ĕçне чылай пурнăçлама тивни курăнать. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Андрей Мясников каланă тăрăх, паркри чи çӳллĕ вырăн чи аяллинчен 3 метр çӳллĕрех пулнă. Çак тайлăма май пур таран тӳрлетме тăрăшнă: пасар енчи çĕре акă 1 метр çурă майлах хăпартнă. Паркри çĕнĕ çулсем те малтанхи çулсен шайĕнчен çӳллĕрех. Эрешлесе хунă тĕрлĕ тĕслĕ брусчатка çул тăрăх утма вара çав тери çăмăл. Çулĕсем те малтанхинчен нумайрах, вĕсем парка темиçе кану вырăнне уйăраççĕ. Апла пулсан кашни çын хăйне меллĕ кану вырăнне суйласа илме пултарĕ.

Унченхи парка пулассипе танлаштарас пулсан, чăнах та, вăл мĕскĕннĕн курăнатчĕ темелле. Кунти палăк та, паттăрсене халалланă монумент та чаплăрах та мăнаçлăрах парка тивĕçлĕн туйăнатчĕç.

«Реконструкци ĕçне Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене халалласа, вĕсен астăвăмне тивĕçлĕ парк тăвас тесе йĕркелерĕмĕр те ĕнтĕ. Ĕçе ахальтен çĕнетнĕ парк кăна пултăр тесе тытăнман эпир, паттăрсене тивĕçлĕ парк пултăр тесе тытăннă. Муркаш çыннисем те хăтлă, чаплă паркра канма тивĕçлĕ тесе шутлатăп эпĕ», – пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне Андрей Мясников.

Ĕçсен иккĕмĕш тапхăрне кăçалах тытăнаççĕ-мĕн. Андрей Мясников каланă тăрăх, иккĕмĕш тапхăрта тума палăртнă ĕçсене пурнăçлакана палăртма çитес вăхăтра аукцион пĕлтерĕç.

Иккĕмĕш тапхăрта çак ĕçсене пурнăçлама пăхнă: парк тавра карта тытаççĕ, парка çутатса тăрассине йĕркелеççĕ тата илемлĕ йывăç-тĕмсем лартаççĕ.

Паркăн эскизĕ çине пăхсан, дизайнер мĕн палăртнă çавă пĕтĕмпех пурнăçа кĕрсе пыни курăнать. Çĕнтерӳ паркĕ чăнах та илемлĕ пулмалла. Муркашсен юратнă кану вырăнĕ çакă пулĕ те.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***